**Тусăмсем**

Мана чĕнчĕç тусăмсем чунпа савса,
Эпĕ юратса килтĕм, ыр сунса.
Эпĕ сире курсан, ыр тусăмсем,
Манăн чĕре тулчĕ савăнăçпа.
Çак тусăмсем умне пĕр тăрсассăн
Юрламасăр чунăм чăтаймĕ;
Çак тусăмсем умне пĕр тăрсассăн
Куççуль тăкăнмасăр пулаймĕ.
Мĕн парам-ши сире, ыр тусăмсем?
Манăн ылтăн-кĕмĕл укçа çук.
Аслă хирте тĕмре çичĕ хăва,
Çивчĕ сил вĕсене уйăрас çук,
Çак тусăмсемпе ман пĕрех чĕре,
Çичĕ тăшман пире уйăрас çук.

1896

*Турхан, Я. Тусăмсем : [сăвă] / Я. Турхан // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 22-23.*